# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

75 (7500) № * Юн кун, 2007 çулхи сентябрĕн (авăн) 12-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Ĕçре тăрăшуллисем

## Коллективра хисепре



*Алексей Валерианович Лаптев районти шалти ĕçсен пайĕнче 1995 çултанпа тăрăшать. 1999 çултан пуçласа вара кинолог пулса вăй хурать. Унăн тăрăшулăхне ĕçри çитĕнӳсемшĕн тивĕçнĕ Тав хучĕсем те çирĕплетеççĕ. Акă çак кунсенче кăна-ха вăл Раççей Федерацийĕн шалти ĕçсен министрĕ Р.Г. Нургалиев алă пуснă Тав çырăвне тивĕçрĕ. Çакă вара ăна малашне татах та тăрăшарах ĕçлеме хистет. Йĕрке хуралĕнче пысăк опыт пухма ĕлкĕрнĕ милиции сотрудникĕ ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать.*

*Сăн ӳкерчĕкре: А.В. Лаптев.*

Пенсионерсене пулăшма

## К. Косачев депутат тăрăшнипе – 27 миллион тенкĕ

**РФ Пенси фончĕ çакăн чухлĕ сумма укçа-тенкĕ уйăрса панă кăçал ĕçлемен пенсионерсемпе инвалидсене адреслă пулăшу парас тĕллевпе.**

Малтанах Пенси фончĕн бюджетĕнче 2007 çул валли çак тĕллевпе 7 миллион тенкĕ уйăрма пăхса хăварнă пулнă. РФ Патшалăх Думин депутачĕ, «Единая Россия» фракци членĕ К.И. Косачев хута кĕнипе çак суммăна самай ӳстерме май килнĕ – республикăна татах 20 миллион тенкĕ уйăрса панă.

2 миллион тенкĕ Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсене Çĕнтерӳ кунĕ тĕлне уйăрса панă. Майăн 9-мĕшĕ тĕлне ăна 5,7 пин участник илнĕ. Ватă çынсен кунĕ валли 4 миллион тенкĕ, Инвалидсен кунĕ валли 2 миллион тенкĕ тата 19 миллион тенкĕне яхăн ĕçлемен пенсионерсене пĕр хут пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшу пама уйăрнă.

Çак пулăшăва илес текенсен заявленийĕсене çынсене социаллă хӳтлĕх паракан пайсем «Раççей пенсионерсен канашĕн» республикăри уйрăмĕпе пĕрле пăхса тухаççĕ, вĕсен укçа-тенкĕпе пурлăх тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвне шута илеççĕ. Ытларах чухне çурт-йĕр çунса кайнисене, пĕчĕк пенси илсе тăракан пĕччен пурăнакан ватăсене пулăшма тăрăшаççĕ.

Паянхи куна Раççей Пенси фончĕ шучĕпе пĕр хут пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшу республикипе ĕçлемен пенсионерсене 4 пин çынна ытла пĕтĕмпе 10 миллион тенкĕлĕх ытла панă. Унăн вăтам виçи 2,3 пин тенкĕпе танлашать. Пăхса тухмалли заявленисем районсенчи социаллă хӳтлĕх пайĕсенче 2 пин ытла. Вĕсене халĕ те йышăнаççĕ.

Юлашки çулсенче Чăваш Республикин Президенчĕ, «Единая Россия» партин Аслă канашĕн членĕ Н.В. Федоров активлă хутшăннипе республикăн социаллă программисене финансламa 200 миллион тенкĕне яхăн уйăрма май килнĕ. Ку вăл пенсионерсемпе инвалидсене адреслă пулăшу пама, уйрăм çуртсене газ кĕртме, ветерансен çурчĕсемпе интернатсене, социаллă пулăшу центрĕсене юсама, вĕсем валли сĕтел-пукан, транспорт, хатĕрсем туянма кайнă укçа-тенкĕ.

2005 çултан тытăнса Раççей Пенси фончĕ Чăваш Республикин адреслă социаллă пргграммине финанслама Патшалăх Думин депутачĕ, тĕнчери ĕçсен комитечĕн председателĕ, «Единая Россия» фракци членĕ К.И. Косачев ыйтнипе хушма укçа-тенкĕ уйăрса парать.

Акă, 2005 çулта уйăрса панă 10 миллион хушма укçа-тенкĕне Улатăр районĕнчи Атратьри психоневрологи интерначĕн пурăнмалли çурчĕн корпусне тума, сĕтел-пукансемпе оборудовани туянма хывнă.

2006 çулта каллех К.И. Косачев тăрăшнипе республикăна социаллă программăсене финанслама 10 миллион тенкĕ хушма укçа-тенкĕ уйăрма май килнĕ. Ку укçа-тенкĕпе Кӳкеçри ачасен çуртне (5 миллион тенкĕ), Йĕпреçри психоневрологи интернатне (4 миллион тенкĕ), Атратьри психоневрологи интерначĕн тасатмалли сооруженийĕсене (1 миллион тенкĕ) юсанă.

Çапла вара, Раççей Пенси фондĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, Пенси фончĕ К.И. Косачев çине тăнипе Чăваш Республикине пĕтĕмпе 40 миллион тенкĕ хушма укçа-тенкĕ уйăрса панă.

**Хамăр инф.**

Район уй-хирĕсенче

## Черетре – çĕр улми

Пĕтĕмĕшле илсен, районти хуçалăхсенче вырма ĕçĕсем вĕçленнĕпе пĕрех. Вырса çапман лаптăксем «Волга» тата «Лидер» хуçалăхсенче кăна юлнă. Районĕпе ку ĕçе 98 процент пурнăçланă.

Кĕрхи культурăсене 4077 гектар (75 процент) акса хăварнă.

Çĕр улми кăларас ĕçсем сарăлса пыраççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне ăна 177 гектар (23 процент) кăларса пухнă.

Камăн сăвăм пысăкрах?

**РАЙОНТИ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ КĂÇАЛХИ СЕНТЯБРĔН 10-МĔШĔНЧЕ КАШНИ ĔНЕРЕН СĔТ ВĂТАМРАН МĔН ЧУХЛĔ СУСА ИЛНИНЕ КĂТАРТНИ**

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Кашни ĕне пуçне сĕт сунă. 2. Иртнĕ çулхи çав вăхăтра сунă (килогрампа).**

| | | |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 6,2 | 8,3 |
| ООО «Волга» | 8,0 | 9,1 |
| «Восток» | 11,1 | 8,3 |
| «Герой» | 12,2 | 11,4 |
| К. Иванов яч. хис. | 8,4 | 7,2 |
| Ильич яч. хис. | 12,0 | 12,0 |
| Ленин яч. хис. | 7,3 | 8,5 |
| «Оринино» | 12,0 | 10,4 |
| «Передовик» | 7,0 | 9,6 |

| | | |
|---|---|---|
| «Свобода» | 10,1 | 11,3 |
| «Сеятель» | 5,6 | 6,0 |
| Суворов яч. хис. | 12,0 | 10,8 |
| ООО АФ "Рассвет" | 7,9 | 7,6 |
| «Ударник» | 12,0 | 11,8 |
| Чапаев яч. хис. | 5,4 | 7,1 |
| «Чемеево» | 7,3 | 10,0 |
| Чкалов яч. хис. | 12,8 | 11,4 |
| **Ял хуçалăх предприятийĕсемпе** | **9,8** | **10,1** |

Ырă ятлисем



*Эсир сăн ӳкерчĕкре (сулахайран сылтăмалла) куракан Михаил Николаевич Кирпичниковпа Валерий Александрович Соловьев “Свобода” хуçалăхра пĕрремĕш кун мар вăй хураççĕ, хăйсене шаннă ĕçре ответлăха туйса тăраççĕ. Ĕç ĕмĕрĕн тĕп пайне техникăпа çыхăнтарнă Михаил Николаевич юлашки 17 çулне тăван хуçалăхри трактор бригадине ертсе пырать, çакăнти ĕç тирпейлĕхне тĕп вырăна хурать. Валерий Александрович вара юлашки çулсенче тăтăшах вырма паттăрĕсенчен пĕри. Кăçал та вăл тытса пыракан “Дон-1500” комбайн вырмара районĕпех малтисен шутĕнче.*

***А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.***

Цифрăсен чĕлхипе: сакăр уйăх итогĕсем

## Кăтартусем пысăкрах та пулма пултарнă

Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, районта демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăру лайăхланма тытăнни сисĕнет. Çулталăк пуçланнăранпа кăçал 277 ача çуралнă (иртнĕ çул çав вăхăтра 250), 456 çын вилнĕ (пĕлтĕр 459).

Кăçал пĕтĕмпе 605845,8 (452548,8) пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă е иртнĕ çулхинчен 33,9 процент нумайрах. Вăл шутран ял хуçалăх продукцине 176174,5 пин тенкĕлĕх (105,3 процент), промышленность предприятийĕсен продукцине 429671,3 пин тенкĕлĕх (150,7 процент). Уйрăмах ӳсĕмлĕ ĕçлесе пыракан промышленность предприятийĕсем хушшинче Муркашри кирпĕч завочĕ (продукци туса кăларассине иртнĕ çулхинчен 3,9 хут ӳстернĕ), «Сеспель» предприяти (171,5 процент), «Моргауши–Хлеб» общество (127,4 процент), «Милград» общество (117,2 процент), Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ (126 процент), «Моргаушрайгаз» филиалĕ (182,4 процент), Муркаш почтамчĕ (219,3 процент).

Районăн хăйĕн бюджет тупăшĕ 34655,3 пин тенкĕпе танлашать (иртнĕ çул çав вăхăтра 21058,2 пин тенкĕ пулнă). Ял тăрăхĕсен бюджет тупăшĕ вара иртнĕ çулхинчен чакнă, 6192 пин тенкĕрен 6163,6 пин тенкĕне юлнă.

Районĕпе пĕтĕмпе 45498 пин тенкĕлĕх (106,2 процент) тӳлевлĕ пулăшу панă. Ку енĕпе пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх муниципаллă унитарлă предприятин ертсе пыракан компанийĕ те, «Моргаушрайбыт» тата ытти предприятисем те япăх мар ĕçленĕ пулсан, «Моргаушрайгаз» предприяти тӳлевлĕ пулăшу парассине пĕлтĕрхинчен 18,2 процент чакарнă.

Ваккăн сутмалли тавар çаврăнăш калăпăшĕ 307703,2 пин тенкĕпе (137,9 процент) танлашнă. Мăн Сĕнтĕр райповĕн те (92207 пин тенкĕлĕх – 122,2 процент), Муркаш райповĕн те (146307 пин тенкĕлĕх – 133,7 процент) кăтартăвĕсем япăх мар. Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райповĕсен обществăлла апатлану предприятийĕсем те унччченхинчен аванрах ĕçлеççĕ.

Районĕпе пĕтĕмпе 4087,9 тонна (111,9 процент) аш-какай хатĕрлесе ăсатнă. Вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенчен – 1849,9 тонна (106,4 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенчен – 92 тонна (95 процент), уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенчен – 2146 тонна (118,1 процент).

Сĕт 34324 тонна (102 процент) суса илнĕ. Анчах ӳсĕм ытларах уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсем шучĕпе пулнă. Мĕншĕн тесен ял хуçалăх предприятийĕсенче сĕт суса илессине иртнĕ çулхи шайран 5,4 процент, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 34,5 процент чакарнă. Уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенчен сĕт сутăн илесси кăна 5,3 процент ӳснĕ.

Районĕпе кашни ĕне пуçне вăтамран 2992 килограмм сĕт суса илнĕ (106,6 процент). Вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче ку кăтарту 2627 килогрампа (пĕлтĕр 2696 килограмм) танлашнă.

Самăртакан мăйракаллă шултра выльăхсем талăкра вăтамран 557 грамм (495 грамм) ӳт хушнă. Сыснасен ӳт хушаслăхĕ вара 335 грамран 333 грама юлнă. Пăрусем те, çурасем те сахалрах илнĕ (81,2 тата 77,3 процент).

Усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне 64,9 центнер (111,9 процент) аш-какай, вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 42 центнер (107,1 процент), 544,8 центнер (102 процент) сĕт, вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 196 центнер (95,3 процент) туса илнĕ.

Чăх-чĕпсĕр пуçне пур йышши выльăх-чĕрлĕх йышĕ те районта чакса пыни курăнать. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, мăйракаллă шултра выльăхсем халĕ 88 процент, вăл шутран ĕнесем 95,8 процент, сыснасем 97,4 процент, сурăх-качака 94,6 процент, лашасем 79,5 процент, чăх-чĕп 111,2 процент.

Ял çыннисенчен сĕт сутăн илесси ӳссе пырать. 2006 çулхи сакăр уйăхра ял çыннисенчен пĕтĕмпе 2246,8 тонна сĕт сутăн илнĕ пулсан, кăçал ку вăхăтра – 3152,3 тонна е 140,3 процент. Муркаш райповĕ те (1069 тонна – 176,6 процент), Мăн Сĕнтĕр райповĕ те (723,3 тонна – 124,3 процент), предпринимательсемпе заводсем те (1360 тонна – 129 процент) ку енĕпе ăнăçлăрах ĕçленĕ.

Аш-какай пĕтĕмпе 698,9 тонна (115,5 процент) сутăн илнĕ. Муркаш райповĕ 43,7 тонна аш-какай сутăн илсе иртнĕ çулхи кăтартăва 52,3 процент, предпринимательсемпе заводсем 604 тонна аш-какай пуçтарса пĕлтĕрхи кăтартăва 17,3 процент ӳстернĕ пулсан, Мăн Сĕнтĕр райповĕ 51,2 тонна (83,5 процент) аш-какай сутăн илнĕ.

Строительствăра 214511 пин тенкĕлĕх инвестицисемпе усă курнă. Инвестицисемпе усă курасси 27,7 процент ӳснĕ. Харпăр хăйĕн çурт-йĕрне тунă çĕрте вара инвестицисемпе усă курнин калăпăшĕ 156060 пин тенкĕпе (125,5 процент) танлашать. 187688 пин тенкĕлĕх (127,6 процент) çурт-йĕр, вăл шутран харпăр хăйĕн çурт-йĕрне 156060 пин тенкĕлĕх (125,5 процент) хута янă. 3,53 километр (134,7 процент) çулсем тунă, вăл шутран çĕнĕрен 1,04 километр тата юсав ĕçсен шучĕпе 2,49 километр.

Ĕççĕррисен хисепĕ 14 çын чухлĕ ӳснĕ, халĕ ĕçпе тивĕçтерекен центрта 62 çын учетра тăрать. Ĕççĕрлĕх шайĕ 0,29 процент.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.**

Юбилей

### *Саламлатпăр*

Хисеплĕрен те хисеплĕ, хаклăран та хаклă, çĕр çинчи чи юратнă çыннăмăр – Патаккасси ялĕнче пурăнакан **Вера Степановна ГОЛУБЕВА** çак кунсенче 55 çул тултарать. Çав ятпа чĕререн саламлатпăр ăна.



Чи ачаш, чи илемлĕ, чи çепĕç
Сăмахсем çеç сана каласа
Саламлатпăр, юратнă аннеçĕм,
Чунтанах ырлăх-сывлăх сунса.
Мĕн тери ăшă кăмăллă, ырă
Эсĕ, хаклă аннеçĕм, ялан.
Эс пулсан юнашар – пурнăç çутă,
Сар хĕвел пек чуна ăшăтсан.

**Ăшă салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

## Район хаçатне çĕнĕ хакпа çырăнтараççĕ

**Райхаçат çырăнмалли хак сентябрĕн 1-мĕшĕнчен малтан пĕлтернĕ пек 27 процент мар, 15 процент чухлĕ çеç хакланчĕ.**

**Вулакансене ăнланмалла пултăр тесе хăш-пĕр цифрăсем илсе кăтартма тивет. Почта хаçат валеçнĕшĕн илекен хака 27,8 процент ӳстерчĕ. Редакци вара хаçат кăларнăшăн илекен хака 5,8 процент çеç хăпартрĕ. Çапла вара райхаçата çырăнса илмелли пĕтĕмĕшле хак 15 процент çеç ӳсрĕ.**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнмалли çĕнĕ хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**Çитес çул та пĕрле пулар. РАЙХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ.**